**Çумăр хыççăн**

Акă тăвăл чарăнать,
аслати те йăвашрах.
Вăйлă çумăр тек çумасть,
уя тухас хăвăртрах.

Ытла аван, пит тӳлек
çумăр хыççăн пуçăра.
Хаяр тăвăл пулман пек,
аслати те аякра.

Пĕлĕт хĕрри çуталать,
сывлăш уççăн туйăнать.
Пăх, асамат кĕперри –
мĕн пур ун пек чиперри?

Вĕл-вĕл вĕçсе çил килет,
кайăк юрри илтĕнет.
Ыраш пусси хумханать,
çак çумăршăн савăнать.

1925

*Трубина, М. Çумăр хыççăн : [сăвă] / М. Трубина // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. – С. 40.*